*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

# ХРЕСЧЕН САССИ

1 (2514) №
Хакӗ ирӗклӗ
Эрнере икӗ хут тухать

2015
январь
кӑрлач 14
ЮНКУН

1991 ҫулхи апрелӗн 21-мӗшӗнче тухма тытӑннӑ

## Тӗрӗслевре – тӗрӗслӗх

**Ялхуҫалӑх таварӗн хакне тӗрӗслесе тӑрасси ӗнер е паян тухнӑ йӑла мар. Ҫӗр ҫинче тӑрӑшакансем е хӑш-пӗр промышленноҫ предприятийӗсем хатӗрлекен 26 тӗрлӗ продукци (вӗсен йышне Раҫҫей Ялхуҫалӑх министерстви палӑртнӑ) хакне республикӑра тӗрӗслесех тӑраҫҫӗ. Пӗлтӗрхи август уйӑхӗн 12-мӗшӗнчен пуҫласа пурнӑҫланать ҫак ӗҫ.**

Чӑваш Республикин Ялхуҫалӑх министерстви пӗлтернӗ тӑрӑх – халӑхшӑн питех те пӗлтерӗшлӗ продукци хакӗсем хальхи вӑхӑтра йӗркеллӗ, виҫеллӗ. Республикӑра апат-ҫимӗҫ, ҫӗр ҫинче туса илекен чӗртавар ҫителӗклӗ. Тӗрӗслев пуҫланнӑранпа чӑх ашӗн хакӗ улшӑнманпа пӗрех, ырашпа тулӑ ҫӑнӑхӗнчен пӗҫернӗ ҫӑкӑрӑн тата сысна какайӗн хакӗсем кӑшт ӳснӗ. Ҫӗрулми, пахча ҫимӗҫ, сӗт юр-варӗ вара чӑннипех те хакланни сисӗнет.

Тӗслӗхрен, ҫӗрулми хакӗ тӗрӗслев пуҫланнӑранпа 28,8 процент ӳснӗ, хальхи тапхӑрта пӗр килограмне 15,2 тенкӗпе те туянма пулать. Анчах тепӗр ҫӗрте вӑл 30 тенке те ҫитсе пырать. "Агро-инноваци" предприятин тишкерӗвӗ тӑрӑх – Самар облаҫӗнче те "иккӗмӗш ҫӑкӑр" хакӗ ҫавнашкалах. Чӗмпӗр облаҫӗнче вара унӑн килограмӗ 35 тенке яхӑн.

Хӗллехи вӑхӑтра пахча ҫимӗҫпе ҫӗрулми хакланнинчен тӗлӗнмелле мар, мӗншӗн тесен ҫулсеренех ҫапла пулса пырать. Ҫурла уйӑхӗнче пахча ҫимӗҫне уйранах сутнӑ пулсан хӗле кӗрес умӗн ӑна пуҫтарса кӗртсе пӳлмене упрама хунӑ. Апла пулсан хресчен тӑкакланнӑ, ҫавӑнпа чӗртаварӑн хакӗ те ӳснӗ.

Иртнӗ ҫулхи декабрӗн 29-мӗшӗ тӗлне Чӑвашстат кӑтартӑвӗпе пирӗн республикӑра 1 кило ҫӗрулми хакӗ 23,06 тенкӗпе танлашнӑ, кишӗрӗн – 22,75 тенкӗпе. Федераци Атӑлҫи округӗнче ку хаксем вӑтам шутланнӑ: ҫӗрулми хакне республика 5-мӗш, кишӗрпе 6-мӗш вырӑнта тӑнӑ.

Купӑста палӑрмаллах хакланнӑ. Август уйӑхӗн варринче ӑна 7 тенкӗпе туянма май пулнӑ. Сентябрь вӗҫӗнче, октябрьте, курттӑммӑн пухса кӗртнӗ тапхӑрта, 4,5-5 тенкӗпех сутнӑ. Декабрӗн иккӗмӗш ҫурринчен ҫеҫ чӗрӗ купӑста хакӗ ӳснӗ. Анчах федераци Атӑлҫи тӑрӑхӗнчи регионсен хушшинче пирӗн республика купӑстапа чи хаклисен шутне лекнӗ: килограмӗ 29,71 тенке ҫитнӗ.

Республикӑн Ялхуҫалӑх министерстви купӑста хакне йӗркелес тӗлӗшпе фермерсемпе калаҫусем ирттерет. Пӗр чӗлхе тупсан суту-илӳ предприятийӗсенче купӑста ҫырлахтаруллӑ хакпа сутӑнма тытӑнмалла.

Тӗрӗслев пуҫланнӑранпа чӗрӗ сӗт хакӗ те ӳснӗ. Пӗлтӗрхи декабрӗн 31-мӗшӗ тӗлне унӑн вӑтам хакӗ 20,27 тенкӗ пулнӑ, август уйӑхӗнчипе танлаштарсан 35,1 процент ӳснӗ. Куна та ҫулталӑкри тапхӑрпа ӑнлантармалла. Ҫулла сӗт ытлашшипех чухне хак йӳнелет, кӗркуннепе хӗлле хакланать. Иртнӗ ҫул хальхи тапхӑрти хак 4,6 процент пысӑкрах пулнӑ.

Ҫавах та ҫакӑ лӑплантармасть. Чӑвашстат кӑтартӑвӗ патнех таврӑнар. Пӗлтӗрхи декабрӗн 12-мӗшӗ тӗлне пирӗн республикӑра ӗҫмелли сӗт хакӗ федерацин Атӑлҫи округӗнче чӑннипех чи пысӑккисен шутӗнче пулнӑ, пӗр литр сӗт 44,62 тенкӗпе танлашнӑ, округри вӑтам кӑтартуран иртнӗ.

Кӳршӗ регионсенче хаксен "тилхепине" тытма пӗлеҫҫӗ тетӗр-и? Лару-тӑру ҫакӑнпа кӑна ҫыхӑнман. Унта сӗте хуҫалӑхсенчен йӳнӗрех хакпа туянаҫҫӗ. Кун пек чухне кам шар курать, тарӑхать? Паллах, ҫӗр ӗҫченӗ, ял ҫынни.

Лавккасенче сӗт хакӗ ӳснин сӑлтавне тӗпчемесӗр иртме ҫук. Ку тӗлӗшпе республикӑра январӗн иккӗмӗш ҫуррине сӗт тирпейлекен предприятисемпе ӗҫлӗ канашлу ирттерме палӑртнӑ.

Федерацин Атӑлҫи округӗнчи регионсемпе танлаштарсан пирӗн республикӑра ҫавах та хытӑ тата ҫемҫе йышши сырсем, тулӑ ҫӑнӑхӗ, унран пӗҫернӗ ҫӑкӑр, ыраш ҫӑкӑрӗ, сысна (шӑмӑсӑррине шута илмесӗр), чӑх, ӗне (каллех шӑмӑсӑррине шута хумасӑр) ашӗ самай йӳнӗрех.

Апат-ҫимӗҫ хакӗсене республика Пуҫлӑхӗ Михаил Игнатьев ҫак тунтикун ирттернӗ канашлура та сӳтсе явнӑ. Чӑваш Ен ертӳҫи яваплӑ ҫынсене хаксене тӑтӑшах тӗрӗслемеллине, вырӑнти хресченсемпе фермерсене хӑйсен таварӗпе сутӑ тума мӗнпур май туса памаллине аса илтернӗ.

**Ирина ПАВЛОВА.**

## Чӗртавара тирпейлекенсене пулӑшма

Ялхуҫалӑх чӗртаварне тирпейлекенсем малашне ҫӗр ӗҫченӗсем пекех патшалӑх паракан ҫӑмӑллӑхпа усӑ курма тытӑнӗҫ. Раҫҫей Федерацийӗн Президенчӗ Владимир Путин ҫакна ялхуҫалӑхне аталантарасси ҫинчен калакан саккуна улшӑнусем кӗртсе ҫирӗплетнӗ. Федераци саккунне вӑл иртнӗ ҫулхи декабрӗн 29-мӗшӗнче алӑ пуснӑ.

Ҫӗнеллӗ саккунпа килӗшӳллӗн ялхуҫалӑх продукцине тирпейлекен предприятисем ҫӑмӑллатнӑ майпа кредит илме пултараҫҫӗ. Анчах пурте мар – патшалӑх пулӑшӑвне адреслӑ йӗркелесшӗн. Тӗслӗхрен, вӗсем халӑхшӑн мӗнлерех пӗлтерӗшлине кура тата хальччен ют ҫӗршывра туса кӑларнӑ апат-ҫимӗҫе хӑйсем патӗнче хатӗрлеме пултарнине пӑхса. Субсиди виҫине правительство палӑртӗ.

Раҫҫей статистикин кӑтартӑвӗ тӑрӑх – апат-ҫимӗҫ хатӗрлессипе ӗҫлекен организацисен пурлӑх никӗсӗ чухӑнланать. Сӑмахран, 2013 ҫулта вӗсен тӗп тытӑмӗсем 45,8 процент чухлӗ чухӑнланнӑ. Ҫав шутра – сӗт юр-варӗн производствинче – 47,4, ача-пӑча валли тата ятарлӑ диета продукчӗ хатӗрлессинче – 48,9, ҫӑкӑр пӗҫерес тата вӑрах упранайман кондитер изделийӗсем тӑвас тытӑмра – 49 процент.

Апат-ҫимӗҫ промышленноҫӗнчи машинӑсемпе ытти ӗҫ хатӗрӗсем кивелсе пынин кӑтартӑвӗ тата пысӑкрах: 2013 ҫулта вӑл 56,9 процента ҫитнӗ. Ҫав шутра ҫӗрулмие, пахча ҫимӗҫе, улма-ҫырлана тирпейлесе консервлас отрасльте – 61,5, ача-пӑча валли апат хатӗрлессинче – 63,9 процент. Ҫавӑнпа ялхуҫалӑхне аталантарасси ҫинчен калакан саккуна улшӑну кӗртни питех те вырӑнлӑ.

**Надежда АНДРЕЕВА.**

## Йывӑр хуйха ӗҫ ҫӗклет

### Инкек куҫран пӑхса килмест

Кил картишӗнчи ҫунса пӗтеймен мунча кӑшкарӗ, ҫулӑмпа хуралнӑ вите-сарай тӳрех куҫ умне ӳкрӗҫ. Кунта нумаях пулмасть хӑрушӑ инкек пулса иртнине каламасӑрах ӑнлантӑмӑр. Ҫаралса юлнӑ картишӗнче ӗне выльӑхсем тӑраҫҫӗ.

– Сурӑхсене витене хупрӑм-ха, уйрӑм тытмасан ӗнесем тӗксе пӗтереҫҫӗ, – тесе кӗтсе илчӗ пире выльӑхсене апат пама тухнӑ Николай Абрамов фермер. Унтан эпир тӗлӗнсе сӑнанине кура ӑнлантарма васкарӗ. – Иртнӗ кӗркунне сурӑх вити турӑм, ҫуркунне вара вӑл ҫунса кайрӗ. Ҫавӑн хысҫӑн ниепле те уралнаймастӑп-ха.

3-мӗш стр. ➔



## Перекетленнӗ те, хутшӑннӑ та

Иртнӗ ҫулта республикӑра агропромышленноҫ комплексне аталантарма 2453,6 млн тенкӗ (2013 ҫулта та ҫавӑн чухлӗ пулнӑ) уйӑрнӑ, ҫав шутра – федераци бюджетӗнчен – 1620,5 млн (виҫӗм ҫулхи шайран 104 процент), Чӑваш Ен енчӗкӗнчен – 833,1 млн тенкӗ (93 процент). Ҫулталӑк вӗҫленнӗ тӗле ялхуҫалӑх предприятийӗсене пӗтӗмпе 2430 млн тенкӗ (ҫулталӑкри лимитӑн 99 процентӗ) тӳленӗ. Ку шутра федераци хыснинчен – 1614,9 млн (уйӑрнӑ висен 99,7 проценчӗ), республика бюджетӗнчен – 815,1 млн тенкӗ (ҫулталӑкри лимитӑн 97,8 проценчӗ).

Патшалӑхӑн тӗрлӗ енлӗ пулӑшӑвӗпе хресченсем кӑҫал та усӑ курма пултараҫҫӗ, вӗсене упраса хӑварнӑ. Ҫакӑнпа пӗрлех республикӑра вӗсен шутне ӳстерме те палӑртнӑ. Тӗслӗхрен, ялхуҫалӑхӗн чӗртаварне тирпейлессипе тата ӑна вырнаҫтарассипе ӗҫлекен кооперативсене пурлӑхпа техника никӗсне анлӑлатма, ҫӗнетме хысна 5 млн тенкӗ уйӑрнӑ. Акмалли вӑрлӑх пахалӑхне лайӑхлатас тӗлӗшпе тӑрӑшакансене те хавхалантарма палӑртнӑ. Вӑрлӑх заводӗсем тума, селекци ӗҫӗн пурлӑхпа техника никӗсне ҫӗнетме 7 млн тенкӗ уйӑрнӑ.

Ҫак енсемпе республикӑра тӗллевлӗ программӑсем хатӗрленӗ. Федераци бюджетӗнчен хушма укҫа илес тӗллевпе вӗсене Раҫҫей Ялхуҫалӑх министерствине ярса панӑ. Конкурс витӗр ӑнӑҫлӑ тухсан ӗмӗт пурнӑҫланасса шанма пулать.

Кунсӑр пуҫне Раҫҫей Ялхуҫалӑх министерстви хатӗрленӗ ятарлӑ проектсемпе пирӗн республикӑна федераци бюджетӗнчен 148202 пин тенкӗ уйӑрма палӑртнӑ. Вӗсен шутӗнче ҫаксем: ӑратлӑ выльӑх-чӗрлӗх тытӑмне аталантарма – 31745,7 пин тенкӗ, аш нумай паракан мӑйракаллӑ шултра выльӑх ӗрчетме – 37,4 пин тенкӗ, сутнӑ 1 кило сӗтшӗн – 17485,4 пин тенкӗ, чи паха вӑрлӑхпа усӑ курнӑшӑн – 14986,5 пин тенкӗ, нумай ҫул ӳсекен улма-ҫырла йывӑҫӗсем лартса ӳстернӗ тӑкака саплаштарма – 2798,4 пин тенкӗ, тухӑҫ паман кивӗ садсене кӑкласа тасатнӑ, вӗсене ҫӗнӗрен аталантарнӑ тӑкака саплаштарма – 102,2 пин тенкӗ тата ытти те.

Кӑҫал агропромышленноҫа аталантарма республика хыснинчен пӗтӗмпе 807210,2 пин тенкӗ субсиди уйӑрнӑ.

**Ольга СЕРГЕЕВА.**

### ҪАНТАЛӐК

| Шупашкарта | Вӑхӑт | 14.01 | 15.01 |
|---|---|---|---|
| Температура, °C | 2–4 сехетре<br>14–16 сехетре | –6<br>0 | –5<br>–1 |
| Юр ҫӑвать | | ⁂ | ⁂ |
| Атмосфера пусӑмӗ, мм | | 743 | 748 |

**Мĕн каластарать?**

# Ырра шанар

**Экономика тĕлĕшĕнчен пурнăç йывăрлансассăн та Çĕнĕ çул пуçламăшĕнче кун пирки шухăшласа кулянас килмест. Çĕнĕ телей, лайăх пурнăç çинченех ĕмĕтленетĕн.**

Йывăр вăхăтра тĕпчевçĕсемпе ăсчахсем, темшĕн-çке шанăç-ĕмĕт пурнăçланасси пирки мар, татăлма пултарасси çинчен ытларах калаçма тăрăшаççĕ.

Тĕнчери агентствăсен октябрь уйăхĕнчи прогнозĕсене тишкерсессĕн декабрь уйăхĕнче валюта тата нефть хакĕсем мĕнле пуласса пĕри те тĕрĕс калайман. Тĕслĕхрен, финанс тĕнчинче палăрса тăракан Bank of Amerika çулталăк вĕçленнĕ тĕле пĕр баррель нефть хакĕ 80 доллартан кăшт кăна иртĕ тенĕ. 45 тенкĕ 1 доллар шайне ларасса пĕлтернĕ. Çак вăхăтра хамăр Раççейри экономика аталанăвĕн министерстви 2015 çул валли тунă прогнозра пĕр доллара 39,6 тенкĕпе танлаштарнă. Министерство хăйĕн прогнозне тăвата хутчен çĕнетнĕ, анчах нихăшĕнче те малашнехи пурнăçра мĕнле пуласса тĕрĕс палăртайман. Вăл тунă кăтартусем чăннинчен юлса пынă. Урăхла каласан, паян валюта тĕнчинче хуçаланакан ĕç-пуçа ниепле те планлаймастăн, маларах палăртса хураймастăн. Раççее хирĕçле санкцисене шута илсен те. Пĕр баррель нефть хакĕ 65 доллартан чаксан Америка та çухату тÿсме пултарать. Сланц газне кăларассипе тата малалла ярассипе çыхăннă пĕлтерĕшлĕ проектсене унăн ирĕксĕрех "шăнтса" лартма тивет. 60 доллартан ÿссен вара экономикăн нефтьсĕр пурăнайман тытăмĕсем ĕçлеймĕç.

Çавăнпа нефть хакĕпе вылянă май Раççей тенкине хĕстерсе никам та тупăшлă пулаймĕ. Çав шутра – Сауд Арави çĕршывĕ те. Нефть хакне тытса пыраканĕ – шăпах вăл. Пĕр баррель нефть 50 тенкĕрен те йÿнелчĕ акă... Çитес çуркунне тĕлне вăл хăпармалла теççĕ те. Мĕншĕн шăпах çуркунне тĕлне-и? Ку вăхăтра ака ĕçĕсем пуçланаççĕ, унăн хакĕ хăнăхнă йăлапа ÿсмелле.

Пĕр баррель нефть хакĕ 65 доллар чухне Раççей чиперех пурăнмалла. 2009 çулхи кризисра çав хак 61 доллар пулнă, анчах экономика чăхăмламан.

Доллар, çавăн пекех евро та хальлĕхе пирĕншĕн пĕлтерĕшлĕ, вĕсен витĕмне шута илмесĕр ниепле те май çук. Хамăрăн экономикăна темĕн пек тăрăшсан та кĕсеке вăхăтра тĕпрен улăштарса çĕнетеймĕпĕр. Çĕр айĕнчи пурлăх хакĕсен куçĕнченех пăхма тивет. Бизнеса энергетика тытăмĕнчен тăрук уйăрса пăх-ха! Питех те йывăр. Экономикăн ытти тытăмĕпе танлаштарсан энергетикăра тупăш самай хăвăрт ÿсет. Правительствăна килекен ыйтусен 80 процентĕ çĕр айĕнчи пурлăха туянма ирĕк ыйтассипе çыхăнни çинчен ытахальтен каламарĕ Раççей Президенчĕ. Нефть кăларнисĕр е металпа сутă тунисĕр пуçне ытти енпе пысăк ĕç пуçлама Раççейре яланхиллех тупăшлă мар.

Кун çумне çĕршывран укçа-тенкĕ çаплипех "тарнине", инвестици хывма илĕртÿллех пулманнине шута илсен федераци бюджечĕ ыран е виçмине хăй хальлĕн çĕр айĕнчи пурлăх хакĕсене пăхмасăр халăха туллин "тăрантарасси" çинчен калаçма иртерех. Пĕр е пилĕк çул хушшинче "пиçсе" тухма пултаракан ĕç мар ку. Çавăнпа чĕлхене тин кăна кĕнĕ "импортозамещение" текен ăнлава е халиччен ют çĕршывран кÿрсе килнĕ тавара хамăр патра хатĕрлеме пуçламалла тенине çĕнĕ куçпа хакламалла. Технологи енчен кăткăс производствăна самантра йĕркелейместĕн.

Ялхуçалăхĕн вара ку тĕлĕшпе ташша яма сăлтав пур. Халăха вăл хамăр патра çитĕнтернĕ çимĕçпе туллин тивĕçтерме пултарать. Ĕç чарăнман, фермерсен вăй-хал пур, хресчене патшалăх программисем аталанма май параççĕ. Раççей Президенчĕ асăннă тăрăх – кăçал ялхуçалăхне тĕрлĕ енлĕн аталантарма 200 миллиард тенке яхăн укçа уйăрнă. Çакă ыррине шанма май парать. Хресченĕн çакăнпа усă курса çаврăнăçуллăрах, тăрăшуллăрах кăна пулмалла. Ара 2-3 çултан пирĕн пурнăçа ытти çĕршывсем – Латинла Америка, Китай, Инди тата Лăпкă океан таврашĕнчисем – хăйсен таварĕпе кĕме тытăнĕç.

Экономикăри йывăр тапхăрта пуякансем те тупăнаççĕ. Вĕсем пĕр кунпа пурăнма хăнăхнă. Тавара сутма халех кăларса хумалла мар, хак ÿсессе кĕтмелле, туянакан кĕсйине ним юлмиччен пушатмалла – çакнашкал шухăшпа аскăнаççĕ. Çĕршывăн ыранхи, тепĕр кунхи, малашнехи пурнăçĕ кулянтармасть кун пек усламçăсене.

Патшалăх потребительсен кооперации тытăмне шанать. Хаксен тупăшăвĕнче унăн çулпуç вырăнĕнче пулмалла, ял çыннине тупăшсăр хăвармалла мар, хаксене "çыртмалла" туса тавар туянаканăн кĕсйине виçесĕр кĕрсе каяс çук.

Çĕнĕ çул каçне хресчен тулăх уяв сĕтелĕ хушшине ларсах ирттерчĕ ахăртнех. Анчах çав сĕтел тепĕр çул мĕнле пуласси çинчен шухăшламасăр тăма та пултараймасть. Кун пирки хальлĕхе ăна никам та, влаçри пĕр çын та, çав шутра экономика министерствинчи те, шантарса хураймĕ.

Сĕтел çине хăнăхнă пек, тен, пулă вăлчи кăларса лартаймĕ. Теприн вăл малтанхи çулсенче те пулман. Вăлчапа сăйланмасăр та чипер пурăнать. Çуккишĕн пит кулянса ларма хăнăхман Раççейре.

Чăваш Енре те çаплах. Çĕнĕ çула ирттерме питех те кирлĕ çимĕç çитмесен е ăна йÿнĕрех хакпа туянас тесе ентешсем уяв ярмăркkисене васкарĕç. Шупашкар хулинче "Николаевский" суту-илÿ комплексĕнче, "Северная", "Шупашкар" лавкка çывăхĕнчи пасарсенче пулчĕç вĕсем. Унта хамăр республикăра туса илнĕ пахча çимĕç, аш-какай, пулă тата темтепĕр туянма май килчĕ. Апла уяв черккисене çĕкленĕ май Çĕнĕ çул каçĕнче эсир пĕр-пĕрне ыррине кăна сунтăр пулĕ?!



# Çăкăр пулсан...

Çĕнĕ çул умĕн Патшалăх Думин аграри комитечĕ ялти пурнăçа аталантармалли çĕнĕ майсене сÿтсе явнă. Комитет пуçлăхĕн çумĕн Сергей Доронинăн шухăшĕпе ялхуçалăхĕнче хамăр патри (çĕршыври) технологисене пурнăçа кĕртсен ÿсĕмсем тума пулать. Вĕсен шутĕнче – тĕп-тĕрĕс çĕр ĕç мелĕпе, геонавигаци системипе, спутник карттисемпе, удобрени мĕн чухлĕ кирлине палăртнă тата выльăхăн, ÿсентăранăн ген тытăмне тĕпченĕ чухне компьютер программисемпе, биоэнергетикăпа усă курни.

Çавра сĕтел тавра пуçтарăннисем палăртнă тăрăх – выльăх ăрачĕсемпе ÿсен-тăран сорчĕсене çĕнетсе лайăхлатас ĕçре паян ытларах чикĕ леш енчи мелсемпе усă кураççĕ. Çакă çĕршыва апат-çимĕçпе туллин тивĕçтерме ура хурать. Пĕлтĕр ютран кÿрсе килнĕ сахăр кăшманĕн вăрлăхĕ 96 процента çитнĕ, хĕвелçаврăнăшĕн – 46, кукурусăн – 43, çĕрулмин – 62 процента. Çитсе пыман выльăх йышне те çулсерен ют çĕршывсенче кăларнă ăратсемпе тултараççĕ. Генетикăпа селекци тытăмĕсене хамăр патра аталантармасан пире малашне питех те йывăр килĕ.

Раççейри "Регион развитие" обществăлла учреждение ертсе пыракан Юрий Якимович "Инновациллĕ ял" ятлă проектпа паллаштарнă. Вăл яла шăпах çĕнĕ технологисемпе усă курса аталантарасшăн. Проекта Аçтăрхан облаçĕнчи Красноярск районĕнче пурнăçа кĕртесшĕн.

Ялхуçалăхне аталантарас тесен патшалăхăн, бизнесăн, наукăн тата хресченĕн пĕрлешсе тăрăшмалла. Капла кăна мала кайма пулать. Çĕр тухăçлăхне органикăпа усă курса ÿстерме сĕннĕ. Раççейĕпе 40 миллион гектар çĕр "канать", тăпрари микроорганизмсене апатлантарма органика темĕн чухлех.

"Ялта строительство бази пулмасан пĕр проект та пурнăçланаймасть", – шухăшне пĕлтерме васканă "Центрсельстрой" АО президенчĕ Сергей Мытарев. Апла строительство енĕпе ĕçлекен кооперативсен виçĕ ярăмлă тытăмне (район-регион-центр) йĕркелемелле.

Регионсенчен çитнĕ çынсем ял пурнăçне улăштарас тĕлĕшпе хăйсен шухăшĕсене шута илме сĕннĕ. Пурне те пурнăçа кĕртме аграрисен, паллах, укçа-тенкĕ çитмест. Сергей Доронин асăннă тăрăх – 2015 çул бюджечĕ малтанхинчен чухăнрах пулĕ. Кăна шута илсен ялсене аталантарасси пирки калаçма йывăр. Укçатенкĕ апат-çимĕç туса илме каять. Ял çыннин вара хăтлăхра пурăнас, такăр çулпа утас килет...

"Вырăнти çынсен хăйсен пуçарулăх кăтартмалла, пĕлтерĕшлĕ ыйтусене пĕрлехи вăйпа татса пама хăнăхмалла. Малашлăх вĕсен аллинче. Чылай çĕрте ял çыннисенчен тухнă пиншер проект пурнăçланать", – пĕтĕмлетнĕ шухăшне Сергей Доронин.

**Ирина НИКИТИНА.**

**ВĂЙ ПАТĂР!**

# Çĕр – пурнăç никĕсĕ

Çын сăмахĕпе мар, ĕçĕпе пултарулăхне кăтартса патăр.

Тăвай районĕнчи Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ механизаторĕ Петр Николаевич Николаев нумай калаçма юратмасть. Ĕçре ăна çитекен çук. Ленин ячĕллĕ хуçалăхра çуркунне ака-суха пуçлама яланах çак хиселлĕ çынна шанаççĕ. «Алли çăмăл, унăн хыççăн ĕç кал-кал пырать», – теççĕ хуçалăх ĕçченĕсем.

Çĕр çыннин çулла та, хĕлле те ларса канма вăхăт сахалрах. Уй-хире шурă кавир хупласанах «хурçă учĕпе» фермăна куçать вăл. Кунта ĕç туллиех: выльăхсене апат памалла, тислĕк кăлармалла тата ытти те. Эпĕ пынă чухне те тракторĕпе хĕрсех тислĕк тăкатчĕ. Техникăна тахçанах тутăх çапнă, çапах çирĕп алăра чăрмавсăр кĕрлет вăл.

– Паллă механизатора кивĕ трактор кăна шанса панă-им? – тĕлĕнсе ыйтрăм унран.

– Унпа вăтăр çул ытла ĕçлетĕп ĕнтĕ. Миçе хутчен сÿтсе пуçтарман-ши ăна? Кашни гайкиболтне пĕлсе çитрĕм ĕнтĕ. Чиперех ĕçлет те пăрахăçлама шел. Халĕ ĕлĕкхи пек йăпăр-япăр техника туянаймăн, мĕн пуррипех çырлахмалла. Çĕнни те пур-ха, унпа ака-сухана тухатăп. Кivвипе ферма таврашĕнче чакаланатăп, – ăнлантарчĕ Петр Николаев.



Çĕр ĕçне вăл çамрăклах тытăннă. Иртен пуçласа каçченех сухаланă-акнă, тырă вырса пуçтарнă. Йывăр та пархатарлă ĕçе кÿлĕннĕшĕн, ытти çамрăк пек хулана тухса кайманшăн пĕртте ÿкĕнмест вăл. «Тăван енрен, çĕртен пахи мĕн пур-ши? Çуркунне уй-хире тухатăп та чун савăнать. Тăри юррине итлесен чун киленет, калча пĕр тикĕс шăтса тухнине курсан чĕрем савăнать», – терĕ вăл. Тивĕçлĕ канура пулин те çамрăксенчен юлмасть. Ырă тĕслĕхĕпе вĕсене хавхалантарса пырать. Иртнĕ çул МТЗ-82 тракторĕпе пĕрчĕллĕ тата пăрça йышши культурăсене 702 гектар акнă вăл. Тĕрĕслев комиссийĕ илемлĕ уйсене, тикĕс те çăра шăтса тухнă калчана курсан тĕлĕннĕ. Акатуйра Петр Николаевăн кăкăрĕ çине хĕрлĕ лента çакса янă, чаплă телевизор парса хавхалантарнă. Ку – унăн пурнăçĕнчи пĕр тĕслĕх. Çĕр ĕçĕнче 42 çул тар тăкнă вăхăтра ун пекки пайтах пулнă. Ахальтен-им ăна Ĕç Мухтавĕн орденне икĕ хутчен парса чысланă. Ветеран нихăçан та пуçне каçăртман, йывăрлăхра ыттисене пулăшма тăрăшнă. Ĕçĕ-хĕлĕ пирки каласа пама ыйтсанах: «Ĕçленипе мĕн мухтанмалла? Çĕр çинче çичĕ хут тар тăкмасăр пулмасть», – терĕ кăна сăпайлăн.

– Çур ĕмĕре яхăн йывăр техникăпа ĕçленĕ хыççăн нивушлĕ шăплăхра канас килмест?

– Ывăнтăм, канас та килет. Анчах хуçалăха мĕнле тăлăха хăварăн? Тракторпа ĕçлекен сахал. Эпĕ те кайсан ака-суха кам тăвĕ? Çĕр – пурнăç никĕсĕ. Ялта çăкăр та туса илмесен мĕнпе пурăнмалла? Çулла хуçалăхра ĕç нумай, анчах хĕлле ĕçĕ те, шалăвĕ те çук. Çавăнпах çамрăксем хуçалăха юласшăн мар, – пăшăрханса пĕлтерчĕ Петр Николаев.

Мăшăрĕпе Людмила Васильевнăпа икĕ ывăл çитĕнтернĕ. Ачисем тахçанах йăваран вĕçсе тухса кайнă ĕнтĕ. Хăйсем те çемьеллĕ. Ашшĕн çулĕпе утма килĕшмен вĕсем, хулара ĕçлесе пурăнаççĕ.

– Кашнин хăйĕн шăпи, кунçулĕ. Мана килĕшнĕ ĕç ыттисен кăмăлне те кайнине пĕлтермест. Чи кирли – суйласа илнĕ умри çул-йĕрпе çирĕппĕн, такăнмасăр утма хăнăхчăр çеç, – пĕтĕмлетрĕ сăмахне ĕç ветеранĕ.

**Лариса НИКИТИНА.**

# Йывăр хуйха ĕç çĕклет

1-мĕш стр.

Хупма вырăн çуккипе пăранланă 17 сурăха тăванĕ патне куçарнă. Пурĕ вара унăн 54 сурăх. «Хăвăртрах вите тумалла. Ыттисем те пăранлама тытăнсан ăçта усрас?» – пăшăрханса пĕлтерчĕ вăл.

Икĕ çул каялла Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Атнарти Николай Абрамов «Фермер ĕçне пуçăнакан» программăна хутшăнса 765 пин тенкĕлĕх гранта тивĕçнĕ. Унпа выльăх апачĕ хатĕрлеме МТЗ-82 трактор, ытти техника туяннă. Сурăх ĕрчетме çĕнĕ вите туса лартнă. Кĕтĕве ÿстерме вăл çителĕксĕррине аван ăнланнă фермер. Ара бизнес-планпа килĕшÿллĕн пилĕк çулта сурăх йышне 100 пуçа çитермелле. Ун чухлĕ выльăха хушма хуçалăхра тытаймăн. Абрамов банкран кредит илсе Коминтерн ячĕллĕ хуçалăхăн кивĕ ферма çурчĕсене туяннă. Вĕсем унăн тăван ялĕнче, Урикассинче, вырнаçнă. Юнашарах анлă улăх сарăлса выртать. Кĕтĕве çÿретме те ирĕклĕ. Юханнă çурт-йĕршĕн предприяти ытлашши ыйтман, 50 пин тенкĕпех çырлахнă.

– Йÿнĕ япала йÿнеçтерет тенĕн кивĕ фермăра тÿрлетмелли-юсамалли те пайтах-тăр?

– Çутă кĕртмелле, чÿречепе алăксене лартмалла, сурăхсене хупма пÿлĕмсем тумалла... Ĕçлемесĕр, тăкакланмасăр пулмасть паллах. Йĕри-тавра карта тытма сетка-рабица туянса хутăм-ха, анчах алă пымасть, – терĕ вăл. – Укçа енчен те татăлса кайрăм.

Хуçалăхра вitесене пăхса юсаса тăманнипе арканмах пуçланă. Пĕрин вара çивиттийĕ те ишĕлсе аннă. Малтанлăха йывăçран тунине хута ярасшăн вăл. «Йывăç çуртра ăшăрах. Сурăхсене тарăн ай сарăмĕпе усрасшăн. Кун пек çĕр шăнмасть, ăшă, – ăнлантарчĕ Николай Абрамов. – Çитес çул куçса пĕтейĕп-ши? Кĕтмен пушар кĕсьене çÿхетсех хăварчĕ».

Çĕнĕ витене чус хăмапа рубероидран, хĕç тимĕртен тунă-мĕн. Фермер каланă тăрăх – сурăха ăшă ытлашши кирлĕ мар, витĕр çил кăна ан вĕртĕр. Шел, тăрăшни харама кайнă. Мунчаран тухнă вут-кăвар самантрах юнашарти вите çине сиксе ÿкнĕ. Пушар ытти хуралта та самай сиенленĕ.

– 70 сурăх тăмалăх тунăчĕ. Юрать инкекчен выльăх-чĕрлĕхе симĕс курăк çине кăларса ĕлкĕртĕмĕр. Унсăрăн ăçта, мĕн çитерсе усранă пулăттăмăр? Йăлтах кĕлпе вĕçрĕ-çке. Çĕннине çак вырăнах, тимĕрпе бетонран тăвасшăн-ха. Кĕтмен инкек çапсах хуçрĕ. Урикассинчи фермăна та йĕркене кĕртеймерĕм, – хаш сывларĕ арçын.

– Каллех Атнарта вите туса тăкаклаччен тен, фермăна юсаса хута ямалла? Выльăх-чĕрлĕхе çавах унта куçаратăр вĕт.

– Сурăхсен йышĕ ÿссех пырать. Усрама вырăн çук. Хĕлĕпе картишĕнче тăратаймăн. Васкавлăн тумах тивет. Фермăна вара çулла кăна юсама тытăнасшăн. Ăна валли укçи-тенки те ытларах кирлĕ. Унта йĕркене кĕртсен мĕнпур выльăх-чĕрлĕхе куçарма кайăп. Урикассинче Атнарти пек мар, выльăх çÿретме вырăн çителĕклĕ. Тен хам та вăл яла пурăнма куçăп – анне çурчĕ пушах ларать.

### Тытман упа тирĕ

– Мĕншĕн сурăхсене суйласа илтĕр-ха? Хальхи вăхăтра ăна сутма йывăртарах тата ĕне пек куллен тупăш та памасть.

– Пирĕн хушма хуçалăхра ĕлĕкренех 7-8 сурăх усранă. Вĕсене пăхма ачаранах хăнăхса-вĕренсе çитнĕ темелле. Хальлĕхе тупăш пирки калаçни тытман упа тирне сÿнĕпе пĕрех. Бизнес-планпа пилĕк çулта 100 сурăха çитермелле. Пурĕ вара – такисемпе путеккисене шутласан – 300 пуçа яхăн. Çавăнпа сурăхсене сутмастăп, ĕрчетме хăваратăп. Кăçал 15 така сутрăм-ха, анчах вăл тăкаксене саплаштараймарĕ. Сурăх йышлă усрама пуçласан укçа ытларах кĕме пуçлĕ-и? – тет Николай Семенович.

Ĕмĕте хăвăртрах пурнăçа кĕртме – сурăхсен йышне ÿстерме – «Романовский» ăрата туянас шухăш та çуралнă. «Вĕсем ачаш, пăхма йывăр. Çитменнине хаклă, чĕрĕ виçин килограмне 400-500 тенкĕ ыйтаççĕ», – пĕлтерчĕ фермер. Халĕ курдюклă сурăхсем ĕрчетет-мĕн. Ку ăрата темиçе çул каяллах Атнар çынни Саратов облаçĕнчен илсе килнĕ. Майĕпен ялĕпех сарăлнă вăл. Чăн та, ăрачĕ вырăнтисемпе хутăшса кайнă ĕнтĕ.

– Апла пысăк услам илме пуçличчен тата виçĕ çул кĕтмелле?

– Кĕтмех тивет, анчах укçасăр та лараймăн. Çавăнпа виçĕ ĕне усратăп, тата иккĕ илесшĕн-ха. Малтанах тына пăрусем туянасшăнччĕ, вĕсем сĕт пама пуçласса каллех икĕ çул кĕтмелле. Ку мана тивĕçтермест. Патăрьел районне шăнкăравласа пăхрăм-ха, пĕр ĕнешĕн 45 пин тенкĕ ыйтаççĕ. Хаклă, анчах мĕн тăвăн?

– Выльăх-чĕрлĕх, кайăк-кĕшĕк... Йывăр пулмĕ-и ĕлкĕрсе пыма?

– Пĕччен мар, çемйипех тар тăкатпăр. Арăма та фермер хуçалăхне явăçтартăм. Канмалли кунсенче Çĕмĕрлерен ывăлсем килсе пулăшаççĕ. Урикассине куçсан кĕтÿç, хуралçă тытасшăн. Кĕтÿ сыхлама алабай текен икĕ йытă çури те туянса ятăм-ха. Йышпа лав та туртма çăмăлрах.

### Ĕмĕтленнипех шур пÿрт лартаймăн

Кил хуçи фермер хуçалăхне пуçарса ярассине пĕлсен мăшăрĕ Любовь Григорьевна хирĕçленĕ. Йывăр çĕклем унăн черченкĕ хулпуççийĕ çине те тиенессе ăнланнă вăл. Çĕнĕ ĕмĕт-шухăшпа хĕрсе кайнă çынна тытса чарайăн-и? Чунне хытарсах килĕшнĕ вăл. Хĕрарăм çăвĕнех кĕтÿ кĕтнĕ. «Ял кĕтĕвĕпе ярсан такасем çухалса пĕтеççĕ. Капла хамăра та лăпкăрах», – терĕ Люба аппа. Чашлаттарса çумăр çăвать-и, хĕртсе хĕвел пăхать-и – выльăхсене яланах ешĕл курăк çинче çÿретнĕ. Кил-тĕрĕшре, пахчара хĕрарăмăн ĕç сахал-им? Упăшки вара выльăх апачĕ хатĕрленĕ, вите тунă.

– Йывăр вăхăтра тарăхнипе упăшкана ятласа та илетĕп. Кам хистенипе çак лава кÿлĕнчĕ-ши? Чавса çывăх та çыртаймăн тенĕн халĕ ĕçлемеллех. Пилĕк çултан куç курĕ – е вăй илсе кайăпăр, е пăрахма тивĕ. Сывлăхăм хавшаккипе хам та ытлашши пулăшаймастăп, – уçса пачĕ чунра капланса çитнине хĕрарăм.

– Ял çыннисем сирĕн ĕç-хĕле мĕнлерех хаклаççĕ?

– Тĕрлĕрен. «Хăйсен сурăхне пăхнăшăн патшалăхран укçа илеççĕ», – текенсем те пур. Пĕррехинче кĕтĕве улăха тÿрех хăваласа тухаймарăмăр – ватă аннем йывăр чирлесе ÿкнĕччĕ. Сурăхсене урамрах çÿретеççĕ тесе самантрах ял тăрăхне çăхавланă. Фермер ĕçне пуçарса яма мĕнле йывăррине ăнланмаççĕ вĕсем.

Нумаях пулмасть фермер ĕçне пуçăнакансен республикăри канашлăвне хутшăнма тÿр килчĕ. Ыттисем каланине тĕлĕнсе итлесе лартăм. Вĕсем мĕн кирлине йăлтах туса çитернĕ. Нумайăшĕ пурлăхпа техника базине унчченех пулнипе çăмăллăнах аталанса кайнă. Манăн вара выльăх кăначчĕ. Вите-сарайне çĕклемелле, техника туянмалла – укçа ăçтан тупмалла? Çÿлтен пулăшакан пулмасан та кансĕр. Кашни утăма шăла çыртса тумалла, çичĕ хут тар кăларса ĕçлемелле, – сăмахларĕ Николай Абрамов.

Çемье пыл хурчĕ те ĕрчетет иккен. «Хамăра валли кăна: сутлăх çук. Йыша ÿстерес шухăш пурччĕ-ха, анчах кунта килĕрен тенĕн пыл хурчĕ тытаççĕ, çимĕçе вырнаçтарма йывăр», – терĕç вĕсем.

– Инкек-синкек, умри йывăрлăх шухăшкăмăлăра улăштармарĕ-и? Ирĕклĕн сывлама паман хăмăта илсе ывăтас килмест-и?

– Тĕплĕ шухăшласа тунă утăмшăн мĕн ÿкĕнмелли? Ĕмĕтленнипех шурă пÿрт лартаймăн. Ăна пурнăçа кĕртме малаллах талпăнмалла. Çĕр çинче ĕçлесе ÿснĕ çынна йывăрлăх та çапса хуçаймĕ, – пĕтĕмлетрĕ фермер.

**Лариса НИКИТИНА.**

## АХ, АНЧАХ...

### Салтак пăтти çиес килмен

Улатăр район сучĕ асăннă тăрăхра пурăнакан çамрăк тĕлĕшпе уголовлă ĕç пуçарнă. Ăна УК 328 статйин 1-мĕш пайĕпе айăплаççĕ.

Каччă 2013 çулхи ноябрь уйăхĕнче çара кайма повестка илнĕ, анчах республикăри пухăну пунктне пыман. Уголовлă ĕçе пăхса тухнă, çамрăка 10 пин тенкĕлĕх штрафланă. Приговор вăя кĕмен.

### Ирсĕр çамрăксем

Шупашкарти Калинин район прокуратури уголовлă ĕç пуçарнă икĕ çамрăк тĕлĕшпе айăплав пĕтĕмлетĕвне çирĕплетнĕ. Вĕсенчен пĕри – çула çитмен çамрăк. Ăна вăрланăшăн, çаратма хăтланнăшăн тата хурахла тапăнушăн айăплаççĕ. Унăн 19 çулти юлташне вара çынна вĕлернĕшĕн те.

Следстви палăртнă тăрăх – 2014 çулхи апрелĕн 27-мĕшĕнче Шупашкарти йывăç çуртра 44 çулти хĕрарăм тата 64 çулти арçын виллисене тупнă.

Тĕпчесе пĕлнĕ хыççăн çакă палăрнă: 2014 çулхи апрелĕн 24-мĕшĕнче çамрăксем çаратас тĕллевпе вĕсем çине тапăннă. Арçынпа хĕрарăма алăпа çеç мар, кирпĕчпе, хăмапа çапнă. Тепĕр кун вĕсем кунта каллех пынă. 19 çулти çамрăк хĕрарăма кĕреçепе хĕненĕ. Арçынна майĕнчен, питĕнчен çĕçĕпе чикнĕ.

### Мăкăне пула

Етĕрне районĕнче пурăнакан 36 çулти Александр Таранцев кăçалхи сентябрь уйăхĕнче сухаламан çĕр лаптăкĕсенче хăй хальлĕн çитĕнекен мăкăнь улăмне пуçтарнă. Наркотĕрĕслев сотрудникĕсем ăна Таранцев килĕнче самаях тупнă.

Етĕрне район сучĕ ку тĕлĕшпе уголовлă ĕç пуçарнă. Çамрăка наркотик хатĕрне саккунсăр майпа упранăшăн айăплаççĕ. Таранцев хăйĕн айăпне йышăннă. Суд ăна 1 çуллăха ирĕкрен хăтарнă. Приговор вăя кĕмен.

### Шăнман пăр çине лартнă

Вăрмар тăрăхĕнчи 70 çулти кинемее ял çынни улталанă. 5 пин тенкĕлĕх хут укçана вакласа пама ыйтнă. Ватă çыннăн куçĕ çивĕч пулманнине кура ăна укçа евĕр туса хатĕрленĕ хут тыттарнă. Кинемей панă 1 пинлĕххисене кĕсйине пĕтĕрсе чикнĕ.

Чăваш Республикин прокуратури çак пулăм тĕлĕшпе пуçарнă уголовлă ĕçе тĕрĕслесе тăрать.

**Валентина МАКСИМОВА.**

## ЧĂВАШ НАЦИ ТЕЛЕКУРАВĔН ЭРНЕЛĔХ ПРОГРАММИ

**Тунтикун, январĕн 19-мĕшĕ**
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ЫЛТĂН ÇУПÇЕРЕН» (6+)
19.00 «ЯШ ЧУХ, ÇАМРĂК ЧУХ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
20.00 «СЛЕД В ИСТОРИИ» (12+)
20.45 «СПОРТ ДЛЯ ВСЕХ» (12+)
21.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
21.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА

**Ытларикун, январĕн 20-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ЫЛТĂН ÇУПÇЕРЕН» (6+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
19.00 «ЭХ, ЮРĂМ, ЯНĂРА» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
20.00 «НА ОЛИМПЕ» (6+)
20.30 «ЗЕМЛЯКИ» (12+)
21.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
21.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
21.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА

**Юнкун, январĕн 21-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ЧĂВАШ ХАЛĂХ ЮМАХĔСЕМ» (12+)
19.00 «ПЕХИЛ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
20.00 «НАОБУМ» (12+)
20.30 «ЗЕМЛЯКИ» (12+)
21.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
21.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА

**Кĕçнерникун, январĕн 22-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
19.00 «КАÇХИ ТĔЛПУЛУ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
20.00 «ЗНАКОМЫЕ ЛИЦА» (12+)
20.30 «ЗЕМЛЯКИ» (12+)
21.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
21.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
21.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА

**Эрнекун, январĕн 23-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ЧĂВАШ ХАЛĂХ ЮМАХĔСЕМ» (0+)
19.00 «КИЛ ĂШШИ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
20.00 «БУХТЫ-БАРАХТЫ» (12+)
20.30 «ЗЕМЛЯКИ» (12+)
21.15 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
21.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА

**Шăматкун, январĕн 24-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
9.00 «КОМФОРТНЫЙ ГОРОД» (12+)
9.30 «ЗЕМЛЯКИ» (12+)
10.00 «ПРИКАЗ: ПЕМЕ ЮРАМАСТЬ». ЧĂВАШЛА КУÇАРНĂ ФИЛЬМ (12+)
17.00 «ЭХ, ЮРРĂМ, ЯНĂРА» (12+)
17.30 «ÇАПЛА ПУЛТĂР!» (12+)
18.30 «КОНЦЕРТ, ПОСВЯЩЕННЫЙ 90-ЛЕТИЮ СО ДНЯ ОСНОВАНИЯ ЧУВАШСКОГО ГОСУДАРСТВЕННОГО АКАДЕМИЧЕСКОГО АНСАМБЛЯ ПЕСНИ И ТАНЦА» (12+)

**Вырсарникун, январĕн 25-мĕшĕ**
9.00 «БУХТЫ-БАРАХТЫ» (12+)
9.30 «ЗЕМЛЯКИ» (12+)
10.00 «ПРИКАЗ: ЧИКĔ УРЛĂ КАÇМАЛЛА». ЧĂВАШЛА КУÇАРНĂ ФИЛЬМ (12+)
17.00 «НА ОЛИМПЕ» (12+)
17.30 «ПЕСНИ РОССИИ». ВСЕРОССИЙСКИЙ ФЕСТИВАЛЬ-МАРАФОН (12+)

РЕКЛАМА, ПĔЛТЕРÿСЕМ

23. **Гравмассу**, песок, бой кирпича, **щебень.** Д-ка. Т. 89061355241.

## УЙĂХ КАЛЕНДАРĔ

| Число, кун | | Январь, 14 – юнкун | Январь, 15 – кĕçнерникун | Январь, 16 – эрнекун | Январь, 17 – шăматкун | Январь, 18 – вырсарникун | Январь, 19 – тунтикун | Январь, 20 – ытларикун |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ХĔВЕЛ | тухать | 8.14 | 8.13 | 8.12 | 8.10 | 8.09 | 8.08 | 8.07 |
| | анать | 15.46 | 15.48 | 15.50 | 15.51 | 15.53 | 15.55 | 15.57 |
| Кун тăршшĕ | | 7.32 | 7.35 | 7.38 | 7.41 | 7.44 | 7.47 | 7.50 |
| УЙĂХ | тăхри | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | çĕнĕ уйăх (16.12) |
| | кунĕ (12 сехет тĕлне) | 24-мĕш кун | 25-мĕш кун | 26-мĕш кун | 27-мĕш кун | 28-мĕш кун | 29-мĕш кун | 30-мĕш кун |
| | | Скорпион паллинче | Скорпион паллинче | Ухăçă паллинче | Ухăçă паллинче | Ухăçă паллинче | Ту качаки паллинче | Ту качаки паллинче |

## АСТĂВĂМ

# «Сăваплă вутпала пурнаттăм...»

«Шăнкăрав курăкĕ» юрра пĕлмен чăваш çуках. Миçе ăру юратса шăрантарнă ăна. Хальхи çамрăксем те кăмăллаççĕ. Юратнă юррăн ĕмĕрĕ вăрăм килчĕ. Шел те, унăн авторĕн кун-çулĕ вара кĕске пулчĕ. Вениамин Пехил (Кондратьев) сăвăç аллă çула çитеймесĕрех çĕре кĕчĕ. Пурăннă пулсан вăл кăçалхи январĕн иккĕмĕшĕнче 60 çул тултаратчĕ.

Вениамин Васильевич 1955 çулта Красноармейски районĕнчи Янкас ялĕнче çуралнă. Вăл сăмах ытарлăхне ачаранах туйнă. Шкулта вĕреннĕ чухнех сăвăсем çырнă. Малтанхи хайлавĕсем «Ял пурнăçĕ» тата «Пионер сасси» хаçатсенче кун çути курнă.

Чăваш патшалăх университетĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн Вениамин Пехил «Ял пурнăçĕ» хаçатра ĕçленĕ, каярахпа «Ялав» журналта тăрăшнă. Унăн сăввисем ăшă кăмăллă, çутă ĕмĕтлĕ, тунсăхлă. Сăвăсемсĕр пуçне пысăкрах калăплă хайлавсем те çырнă вăл.

Пурăннă вăхăтра Вениамин Васильевич виçĕ кĕнеке – «Шăнкăрав курăкĕ», «Янкас йăмрисем» тата «Мерттес» – кăларма ĕлкĕрнĕ.

«Янкас йăмрисем» кĕнекере Нестер Янкас поэта халалланă сăвă-поэма пысăк вырăн йышăнать. Хăй вăхăтĕнче вăл унăн пултарулăхне тĕпчесе хавхаланнă-çке. Вениамин Пехилĕн паллăрах сăввисенчен çаксене палăртмалла: «Çутçанталăк пурне те паха», «Ман пур юратнă енĕм», «Чавса сывăх сыртма çук», «Çак ешĕл çут тĕнче», «Тин çеç пĕçернĕ çăкăр», «Хĕрарăма сив сăмахпа ан хăртăр», «Хамăра пурнатпăр тетпĕр» тата ыттисем.

1986 çулта унăн Чăваш кĕнеке издательствинче «Шăнкăрав курăкĕ» çапăнса тухнă. Унта поэтăн лирикăллă тата философиллĕ сăввисем, çавăн пекех «Мир ялавĕ» поэми кун çути курнă.

Вениамин Васильевич куçару ĕçĕнчен те ютшăнман: ытти халăх произведенийĕсене чăвашла куçарнă. Унсăр пуçне Сталин репрессийĕнче синкер курнă Нестер Янкас, Митта Ваçлейĕ, Петĕр Хусанкай пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ пирки тĕпчевсем çырнă. Акăлчан-чăваш словарьне хатĕрлес тĕлĕшпе чылай çул вăй хунă. Ку енĕпе ăслăлăх статйисен пĕр ярăмне çырса пĕтернĕ. Унăн сăввисемпе композиторсем юрăсем хывнă. «Пĕрремĕш вĕрентекен», «Пурччĕ юрату», «Уйăхлă каç», «Хĕл сивви» юрăсене халăх юратса юрлать.

Сăваплă вутпала пурнаттăм –
тĕнче пĕтмест
чăваш пĕтмесĕр.
Ман шухăш – эс,
Çĕршывăм – эсĕ!

Çак ытарлă сăмахсенче мĕн чухлĕ шухăш пытаннине поэзие юратакансем çеç мар – вулакан та ăнланать, сăвăçăн иксĕлми пултарулăхне ăмсанать.

**Валентина ПЕТРОВА.**

---

### Вениамин ПЕХИЛ

### «Юлташăм сăвăç чунлă...»

Юлташăм сăвăç чунлă:
Çут уйăха курса,
Ăна вăл услам çу тет,
Яшшарăн кукăртса.
Эп урăххи куратăп
Çав уйăх сăнĕнче:
Тин çеç пĕçернĕ çăкăр
Тӳпе ытамĕнче.
Кĕрхи ĕçсем пĕтсессĕн,
Ял-йыш çĕн тырăран
Пĕçернĕ тейĕн çăкăр.
Чăнах çапла – куран.
Çапла каланă халăх
Мĕн ĕлĕк-авалтан,
Ан пул нихçан та аслă,
Тăванăм, çăкăртан.
Çак чăнлăх ĕмĕр аслă,
Вăл пирĕн чĕрере.
Çут уйăх та каç-каçăн
Çакна асилтерет.

### Пурнăç илемĕ

Пурнăçăн илемĕ –
Кайăк юрринче.
Кам ăна итлемĕ? –
Савăк çут тĕнче!
Пурнăçăн илемĕ –
Сарлака уй-хир.
Кам унта çӳремĕ
Савăнса ир-ир?
Пурнăçăн илемĕ
Çирĕп туслăхра.
«Туслăха çĕнеймĕн», –
Теççĕ халăхра.
Чăннипех илемлĕ
Пурнăç таврара:
Çыннисем телейлĕ
Пирĕн çĕршывра.

## ВУЛАВĂШ

### Владимир САПОЖНИКОВ

# Юлашки çапăçу

### Калав

Славянск варринчи "сталинкăн" виçĕ пӳлĕмлĕ хваттерĕнчи кравать çинче Иван Сергеевич пĕчченех выртать. Урамран илтĕнекен взрывсен сассине илтмест те тейĕн. Украина çарĕсем хулана бомбăсем пăрахнă вăхăтра тăхăрвунă çулхискерне виççĕмĕш хутран путвала анма йывăр. Тата юлашки икĕ эрнере татăк сулахай ура шыççи юхма тытăнчĕ те питĕ хытă ыратнăран протез тăхăнма май çук.

Иван Сергеевич Кузьмин хĕрĕх пиллĕкмĕшĕнче Тухăç Пруссие ирĕке кăларнă вăхăтри çапăçусенче пехотăна хирĕç лартнă мина çине пуснă та сусăр пулса юлнă. Ăна, йывăр аманнăскере, фронтри юлташĕ Ярослав Пристай йăтса тухнă. Унпа пĕрле вĕсем хĕрĕх пĕрремĕшĕнчен Мускав тăрăхĕнчен пуçласа разведротăра вăрçăн вăрăм çулне утса тухнă.

...Снаряд шартлатни Кузьмин суртĕнчен инçех мар илтĕнчĕ. Хваттер чӳречисем чанкăртатрĕç, маччаран штукатурка тăкăнчĕ.

"Вăйлă тĕвеççĕ, ирсĕрсем! Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче фашистсем мирлĕ çынсене хĕрхенмен пек Киев карателĕсем те "Градсенчен" халăх пурăнакан кварталсене леплеттереççĕ, – шухăшласа илчĕ Иван Сергеевич. – Юрать-ха мăнукăма путвала вăхăтра ăсатрăм..."

Вунçичĕ çулти Оля – старике çак тĕнчере тытса тăракансенчен юлашки. Вĕсен, мăшăрĕпе иккĕшĕн, вăрçă хыççăн ача часах пулман. Кузьминсем несĕл çуралманран кулянма та тытăннă. Мăшăрланни вунтăхăр çула кайсан тин Маша йывăрланнă. Вася ывăлĕ çутă тĕнчене килнишĕн вĕсем калама çук савăннă.

Арçын ача çирĕп, ăслă ӳснĕ. Шкул хыççăн Сăрт-ту институтне вĕренме кĕнĕ. Унтан вĕренсе тухсан Иван Сергеевич директорта ĕçлекен шахтăна вырнаçнă.

Малтанлăха ашшĕ ывăлне инженер профессийĕн кашни тапхăрне алла илтерессишĕн забоя сăрт-ту мастерĕ пулса ĕçлеме янă. Василий ăна савăнтарнă: питĕ аван ĕçленĕ, лайăх хĕре качча илнĕ, Оля мăнукĕ çуралнă.

Инкек сиксе тухнă – авари. Хăйĕншĕн те, шахтăшăн та хура куна Кузьмин лайăх астăвать: çăлавçăсен бригадине ертсе Вася аварилĕ забоя ансан...

Тарăнра пухăннă метан сирпĕнсен çăлавçăсем те, çăлăнăç кĕтнисем те вилнĕ.

Амăшĕ ывăлĕ вилсен чирлесе ӳкнĕ: юн пусăмĕ выляма тытăннă, инсульт пулнă – паралич çапнă, тепĕр çур çултан вăл пурнăçран уйрăлса кайнă. Тата тепĕр çултан инфаркта пула Василийăн лăпланайман тăлăх арăмĕ те çут тĕнчепе сывпуллашнă.

Хуйхă пуснă Иван Сергеевич пĕчĕк мăнукĕпе Ольăпа кăна тăрса юлнă. Хĕрачана пăхма кирли ăна хуçăлма паман, йывăр тапхăра чăтса ирттерме хистенĕ.

Çапла вĕсем Ольăпа иккĕшĕ унăн пенсийĕпе пурăннă, совет тапхăрĕнче вăл çителĕклех пулнă-ха. СССР арканнă хыççăн Донбасс "незалежняя" (Украинăна – куçаруçă асăрхаттарни) куçнă. Пурнăç йывăрланнă, çапах Кузьмин майне тупкаланă, вахтерта ĕçленĕ – мăнукĕпе иккĕшне пурăнма çителенĕ.

Черетлĕ снаряд сывăххах çурăлнăран пӳрт чĕтренсе илчĕ. Куçа лекнĕ мачча штукатуркине Иван Сергеевич шăлса тасатрĕ.

"Мĕн хăтланаççĕ, фашистсем! Никама та хĕрхенмеççĕ! Украина çарне вăйпа хăваласа кĕртекен çамрăксемпе мĕн тăваççĕ тата? Кӳршĕ хĕрарăмĕ каласа панăччĕ: ачасем кӳлле шыва кĕме кайнă, чăмма пуçланă – шывра çамрăк салтаксен аллине çыхнă, уринчен йывăр япалапа сăнчăрланă тӳрĕ тăракан виллисене курнă... Мирлĕ халăха пеме килĕшмен çамрăксене "укропсем" çĕрле вертолетсенчен кӳлле çапла пăрахнă. Ирсĕрсем! Кун пек тискерлĕх патне вăрçă вăхăтĕнче фашистсем те çитсе тухман! Ăнланмалла мар: çав "сылтăм сектортăн" вырăссене çакăн пек юратманни ăçтан? Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче вырăссем те, украинсем те юнашар çапăçнă – пурте туслă пулнă, пĕр-пĕрне уйăрман. Фронтри тусăмах – Ярослав Пристай – мана, аманнăскере вут-çулăм витĕр çапăçу хирĕнчен ултă километр йăтса утнă, пăрахса хăварман-çке. Вăл Хĕвеланăç Украинăра çуралнă вĕт, Ивано-Франковск тăрăхĕнчи Долина хулинчен. Унтан ытларах параннă, тĕрĕс çын ман пурнăçра урăх пулман, – шухăша путрĕ хăйĕн çывăрмалли пӳлĕмĕнче выртакан старик. – "Потрошенковецсем", – Кузьмин украин карателĕсене США влаçа лартнă Порошенко президент ячĕпе çапла чĕнет, – хулана илмех пултарсан, мăнукăмпа мĕн пулĕ? Хĕрача халь кăна шкултан вĕренсе тухрĕ, Луганскри аслă шкула вĕренме кĕме документсене панăччĕ – кунта вара юнлă вăрçă... Çапах та манăн ăнсăртлăх валли упраса хăварни пур..."

Кузьмин вăйне çухатма ĕлкĕреймен алли пулăшнипе кĕлеткипе йывăррăн çĕкленчĕ, сывă сылтăм урипе сулахай татăккине усса ларчĕ. Сывлăш çавăрса илчĕ, пуç çавăрăнни иртессе кĕтрĕ. Унтан совет тапхăрĕнчех тунă вăрçă хыççăнхи пурнăçра сĕтĕрсе ыванна йывăр протеза хăй патне туртрĕ. Протез варринче çын асăрхасран тахçанах хăй ăсталанă вăрттăн вырăна хуплакан эбонит хупăлчана хыпашласа усрĕ. Çакăнта ĕнтĕ унăн фронтра чухнех юратнă наганĕ упранать.

**Вырăсларан Валерий МУРАВЬЕВ куçарнă.**

*(Вĕçĕ пулать).*

---

*Владимир Григорьевич САПОЖНИКОВ – медицина наукисен докторĕ, Тулăри патшалăх университечĕн профессорĕ. 25 кĕнеке пичетлесе кăларнă. Унăн хайлавĕсем "Наш современник", "Роман-журнал XXI век" тата ытти журналта кун çути курнă. Л.Толстой ячĕллĕ премии лауреачĕ.*

*Вăл Смоленск облаçĕнчи Холм-Жирковски районĕнчи Боголюбово салинче 1955 çулхи сентябрĕн 14-мĕшĕнче çуралнă.*


«ХРЕСЧЕН САССИ»
Обществăпа политика хаçачĕ
Индекс 54838
Учредительсем – Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви, Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăйтытăмлă учрежденийĕ

ДИРЕКТОР-ТĔП РЕДАКТОР – В.В. ТУРКАЙ
С.Л. Павлов – тĕп редактор заместителĕ
РЕДКОЛЛЕГИ:
Е.Н. Николаева – пай редакторĕ
В.М. Петрова – корреспондент
С.Л. Павлов – тĕп редактор заместителĕ
Е.А. Трофимова – хаçат операторĕ

www.hypar.ru,
e-mail: hreschen@cbx.ru
Редакципе издатель адресĕ: Шупашкар, И. Яковлев пр., 13.
Телефонсем:
директор-тĕп редактор – 56-00-67,
тĕп редактор çумĕ – 62-04-54,
пайсем – 56-34-63, 62-50-06, 28-86-68,
реклама пайĕ тел./факс – 28-83-70.
Факс (8352) 62-50-06

Хаçата 2013 çулхи раштав уйăхĕн 10-мĕшĕнче Федерацин сыхăну, информаци технологийĕсемпе массăллă коммуникацисен сферинчи саккунсене пăхăннине сăнаса тăракан службин Чăваш Республикинчи управленийĕ ПИ ТУ 21-00305 № регистрациленĕ.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă хатĕр оригинал-макетран «Чăваш ЕН» ИПК» ПУП типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар, И. Яковлев пр-чĕ, 13.

Графикпа 17 сехетре алă пусмалла.
17 сехетре алă пуснă.
Заказ 34
Тираж 3328


* Рекламăпа пĕлтерӳсем. Реклама тексчĕсемпе пĕлтерӳсемшĕн вĕсене паракансем яваплă.